ЧĂВАШ МУЗЫКИН ПАЛЛĂ ДЕЯТЕЛЕ

Халăх хушшинчен тухнă пултаруллă музыкант С. М. Максимов хăйĕн пĕтĕм кунçулне чăваш культурин аталанăвĕпе çыхăнтарнă. Вăл пуçарнă пархатарлă ĕçе халĕ пирĕн республикăри паллă композиторсемпе дирижерсем, музыкантсемпе юрăçсем малалла туса пыраççĕ. Вĕсенчен чылаймăшĕ — С. М. Максимов ученикĕсем.

Степан Максимович Максимов 1892 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче хальхи Тăвай районне кĕрекен Нăрваш ялĕнче çуралнă. Ялти икĕ класлă шкултан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан, вăл 1907 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне кайса кĕрет. Тепĕр çултан унăн ашшĕ-амăшĕ — чухăн хресченсем — яланлăхах Çĕпĕре пурăнма куçаççĕ. Çапах та Степан Максимов Чĕмпĕртех юлать. Каникул вăхăтĕнче вара, хăйне пурăнмалăх укçа тăвас тесе, Нăрвашри пуянсем патĕнче тăра кĕрĕшсе ĕçлет.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче С. Максимов Ф. Павловпа, И. Максимов-Кошкинскипе пĕр класра вĕреннĕ.

Тахçанах йăлана кĕнĕ йĕркепе çак шкулта пулас учительсем юрлама кăна мар, сĕрмекупăс калама та хăнăхнă. «Сĕрмекупăс калани лайăхрах юрлама пулăшать»,— тенĕ ачасене шкулти учительсем. Çавăнпа та кунта вĕренекенсем валли сĕрмекупăссем яланах çителĕклĕ пулнă. Вĕсемпе арçын ачасем те, хĕрачасем те калаканă. Аслă классенче вара, юлашки икĕ çул, сĕрмекупăс калама вĕрентес ĕçе уйрăмах тимлĕн туса пынă. Вĕренекенсем те ку тĕлĕшпе питĕ тăрăшнă.

Юлашки çул — 1910—1911-мĕш вĕренӳ çулĕнче — С. Максимовпа Ф. Павлова сĕрмекупăс калама Петербургри консерваторире аслă пĕлӳ илнĕ опытлă педагог Н. П. Лыбин вĕрентнĕ.

«Музыка пĕлĕвĕсене малалла ӳстерме пире юрă учителĕ И. М. Дмитриев уйрăмах нумай пулăшрĕ. Вăл та Петербургра, Придворнăй капеллăра вĕреннĕ музыкант пулнă, музыка тĕлĕшпе питĕ пултарулăччĕ»,— тесе çырнă С. Максимов, çав вăхăта аса илсе.

1911 çулта С. Максимов Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухать. Çав тĕле И. М. Дмитриев вилет. И. Я. Яковлев вара шкулти ачасене музыка ĕçне вĕрентме Ф. П. Павловпа С. М. Максимова хăварать. Музыка теорипе гармоние тата сĕрмекупăс калама лайăхрах вĕренччĕр тесе, вĕсене вăл çу кунĕсенче те Чăваш шкулĕнчех усрать. «Музыка ĕçне çав тери юратнăскерсем, эпир Иван Яковлевич сĕнĕвĕпе хавалассах килĕшрĕмĕр»,— тет С. Максимов хăй çырнă пĕр документра.

Юрлама, сĕрмекупăс калама вĕрентекен учитель вырăнĕнче С. Максимов 1911—1912-мĕш вĕренӳ çулĕнчен пуçласа тытăнать. Çак вăхăтра Чăваш шкулĕнче духовойпа хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрĕсем йĕркелеççĕ. Малтан вĕсене Чĕмпĕрти çар полкĕнчи О. Ф. Крамер капельмейстерпа Н. П. Лыбин педагог ертсе пынă.

С. Максимов хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрне хастар хутшăнать: вăл ачасене пĕчченшерĕн те, ушкăнпа та тĕрлĕ кĕвĕ вĕрентет. Хăй те оркестрпа сĕрмекупăс калать. 1912 çулхи январьтен пуçласа оркестра вăл хăех ертсе пырать. Пулас композитор çапла Глинка, Бородин, Чайковский, Верди, Шуберт, Гайдн, Белини, Вебер, Мендельсон, Россини произведенийĕсемпе лайăх паллашать. Хĕлĕхлĕ инструментсен квартетне хутшăнса, вăл Гайдн, Моцарт, Бетховен квартечĕсене калать.

Вырăс халăхĕн 1812 çулхи вăрçари чаплă çĕнтерĕвĕ 100 çул тултарнине паллă туса, Чăваш шкулĕнче Глинка çырнă «Иван Сусанин» опĕрăн уйрăм сыпăкĕсене лартса панă. Çак опĕрăри чылай номерсене С. Максимовпа Ф. Павлов ертсе пынипе хатĕрленĕ. Оркестрпа хор çавăн пекех Моцарт «Реквиемне», Давидăн «Пустыня» ятлă симфониллĕ одинчи уйрăм сыпăксене вĕренсе, концертра лартса панă.

1914 çулта С. Максимов Хусанти музыка училищинче юрă учителĕ ятне илме экстерн йĕркипе экзамен тытать. Пулас композитор чăваш халăх юррисемпе интересленет: «Мана пуринчен ытла Пăва уесĕнчи «юрă йăвине» — «Тăхăр ял» таврашне кайса çӳрени, халăх епле юрланине итлени çак шухăша ячĕ... Халăх юррисене пысăка хурса хаклани, вĕсене тĕрĕсрех çырса илни чăваш музыкине малалла ярĕ тесе, эпĕ 1917 çултан пуçласа юрăсем пухма тытăнтăм...»

Халăх юррисен илемĕпе киленсе, С. Максимов хăйĕн пирвайхи гармонизацийĕсене çырать, вĕсене хорпа юрлама вĕрентет. 1917 çултах чăваш ĕççыннисен Чĕмпĕрпе Хусанта пулса иртнĕ съезчĕсенче вăл хăйĕн юррисене халăх делегачĕсем умĕнче юрлаттарать. 1918 çулта вара çав юрăсене Чĕмпĕрте шапирографпа пичетлесе каларать.

Çапла С. Максимов композитор пултарулăхĕ чăннипех ĕнтĕ Октябрьти Аслă революципе çуралса çекленнĕ. Çĕнĕ пурнăç уçса панă Октябре саламласа, революци идейисене чунтан йышăнса, С. Максимов 1919 çулта Коммунистсен партийĕн ретне кĕрет.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вăл 1925 çулчченех ĕçленĕ. Çав тапхăрта ăна Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи çутĕç пайĕ çумĕнчи тĕрлĕ халăхсен Совечĕн председателĕпе Чăваш бюровĕн заведующийĕпе пулма та суйланă.

1925 çулхи кĕркунне С. Максимов Шупашкара пурăнма куçать. Малтан вăл пĕр çула яхăн Çутĕç Комиссариатĕнче ĕçлет, ун хыççăн музыка шкулĕн заведующийĕ, 1929 çултанпа музыка техникумĕн директорĕ пулать.

Чăваш шкулĕсенче вĕренекенсем валли вăл Мускавра темçе кĕнеке каларать, çав шутра: «Чăваш кĕввисем» ятлă икĕ сборник, «Революци юррисем», «Шкул юррисем». Шупашкарта пичетленĕ «Музыка çырăвне вĕренмелли кĕнекене» те вăлах çырнă.

С. Максимов — композиторфольклорист, чăваш халăх музыкине питĕ аста пĕлекен музыкант пулнă. Халăх юррисене çырса илес ĕçпе вăл Чăваш республикин пур районĕсенче те, Ульяновскпа Куйбышев областĕсенче, Тутарпа Пушкăрт республикисенче тата Уралпа Çĕпĕр таврашĕнче пурăнакан чăвашсем патĕнче нумай вăхăт хушши çӳренĕ. Çапла вăл халăх юррисене икĕ пине яхăн пухнă, чылайăххисене суйласа, уйрăм кĕнекесемпе пичетлесе каларнă. Пĕр Гаврил Федоровран кăна С. Максимов 600 ытла юрă çырса илнĕ.

Хăй пухнă халăх юррисене композитор хорпа тата пĕччен юрлама илемлетнĕ. Вĕсенчен уйрăмах «Атьăр, хĕрсем, вылама», «Акасуха юрри», «Ан аван, шĕшкĕ», «Пирĕн атте—сазан пул», «Уй варринче», «Çăлтăр витĕр», «Шăнкăр кăна», «Мулкач юрри» тата ытти хăйсен илемлĕхĕпе палăраççĕ.

Композиторăн сочиненийĕсем шутĕнче — массăллă юрăсем, симфони оркестрĕ каламалли увертюра, духовой оркестр валли кĕвĕленĕ марш, фортепианăпа каламалли сонатина, тĕрлĕ инструментсем валли пысăках мар произведенисем. Хăйĕн çĕнĕ юррисене вăл «Çĕнĕ юрăсем», «Çĕн сăрнай», «25 массăллă юрă» тата ытти юрă кĕнекисенче пичетленĕ. Вĕсенчен паллараххисем — «Юхмĕ, юхмĕ тек куççулĕ», «Çуллахи пек», «Хутлăм-хутлăм хуткупăс», «Шăнчăк», «Коллектив юрри», «Колхозниксен ĕç юрри».

С. Максимов 1935 çулта Мускаври консерваторирен Р. М. Глиэрпа А. Н. Александров профессорсен класĕнчен вĕренсе тухнă. Каярахпа композитор Чăваш государствăй музыка техникумĕн директорĕ пулнă, преподавательте ĕçленĕ.

Тăван республикăн музыка культурине аталантарас тĕлĕшпе паллă ĕçсем тунăшăн Степан Максимович Максимова Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне панă. Вăл Шупашкарта 1951 çулхи августăн 25-мĕшĕнче вилнĕ.

Чăваш халăхĕ С. М. Максимов композитора яланах асăнса пурăнĕ, унăн юррисем ĕмĕре юлĕç.

Ю. ИЛЮХИН

ЛИТЕРАТУ ХЫПАРЁС

Ульяновск, Куйбышев, Ту тата тăван республикăмăртан хăннă чăваш чĕлхипе вĕрентекен писательсем июль уйăхĕнче 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта ваш писателĕсен Союзĕн пра секретарĕ Г. Ефимов хальхи рăмăрăн ĕçĕ-халĕ çинчен калас ков, А. Лазарева, А. Воробье Анатри хăйсен паянхи ĕçĕсем кăтартрĕç, çĕнĕ произведенийĕ тарчĕç.

* * *

Июлĕн 7-мĕшĕнче чăваш пи зĕнчи парторганизацин уçă пух зĕнчи Коммунистсен партин Ц митечĕн май уйăхĕнчи Пле КПСС Обкомĕн 2-мĕш Пленумĕ чен Чăваш КПСС Обкомĕн ял ведующийĕн заместителĕ Г. А. докладне сӳтсе явăрĕ, парти кăмăллăн ырласа анлă решен